**Халăхра ĕмĕрхи ăс упранать**

*Юпа уйăхĕн 31-мĕшĕнче паллă ăсчах Г.Н. Волков 80 çул тултарать. Хăйĕн автобиографине Геннадий Никандрович темиçе тапхăра пайласа çыратъ: чăвашли, тутарли, вырăсли, нимĕçли, якутли, калмăкли. Ку списока татах тăсса кайма пулать пулĕ. Раççейри, Европăри миçе университетпа институтра лекци вуланине шута илсен Геннадий Волкова Гиннес рекорчĕсен кĕнекине те кĕртме пулать теççĕ. Ăна нумай-нумай çĕршывра пĕлеççĕ, хисеплеççĕ. СССР Педагогика наукисен академийĕн К.Д.Ушинский ячĕллĕ премийĕн лауреачĕ, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ учителĕ, Кăркăс ССР халăха вĕрентес ĕç отличникĕ, Саха Республикин халăха вĕрентес ĕçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Калмăк, Тыва республикисен наукăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, Раççей Федерацийĕн наукăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ паян та ĕçре. Геннадий Никандрович улттăмĕш çул ĕнтĕ Калмăк Республикин патшалăх университетĕнче этнопедагогика çĕнĕлĕхĕсен лабораторине ертсе пырать. Кăçалхи çула Калмăк Республикинче Волков çулталăкĕ тесе пĕлтернĕ. Геннадий Никандрович çинчен шкул ачисем сочиненисем çыраççĕ, ун ячĕпе вулавсем ирттереççĕ.*

*Чăваш Енре те манмаççĕ мухтавлă ентешĕмĕре. Кăçал Геннадий Никандровича Чăваш Республикин патшалăх премине парса чыс турĕç. Чăваш кĕнеке издательстви унăн юмахĕсемпе калавĕсене, очеркĕсене «Кил илемĕ» ятпа уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларчĕ. Хăйĕнпе çыру урлă тата телефонпа куллен çыхăну тытса хавхаланса ĕçлерĕмĕр. Чунĕпе Шупашкартаччĕ Геннадий Никандрович. Вĕренӳ çулĕ вĕçленсен хăй те килсе çитрĕ.*

*Бюджетран укçа уйăрса панисĕр пуçне юбилей кăларăмне илемлетме авторăн ентешĕсем Н.Герасимовпа К.Портнов хаваспах пулăшрĕç. Тавах пурне те.*

*Элистаран Шупашкара Санкт-Петербург урлă çитрĕ Геннадий Никандрович. Çав тери ывăннăччĕ хăй.*

– Хĕрӳ хĕвел аса илтерчĕ хам текех çамрăк маррине. Çул çӳреме йывăр. Çапах та, малашне те пулать - те пулмасть каясси, чĕннĕ çĕре çитесех килчĕ. Ленинградра – ку хулана манăн пĕрре те Санкт-Петербург тесе калас килмест – çулсеренех ирттерекен Лихачев вулавне хутшăнтăм, – терĕ паллă ученăй. – Кăçалхипе çиччĕмĕш хут пулса иртрĕ. Теми – «Диалог и конфликт культур» – шухăшлаттараканскер. Эпĕ те доклад турăм. Хамăн сăмахра çак шухăша уйрăмах палăртса хăвартăм: культура пур çĕрте хирĕçӳ сиксе тухмалла мар. Конфликт пĕр-пĕрне ăнланман, культура çук е вăл çителĕксĕр чух пуçланать. Хам ĕмĕрте эпĕ таçта та çитнĕ, тем тĕрлĕ халăх çыннисемпе те хутшăннă. Культурăсен диалогĕн тĕслĕхĕсене темĕн чухлех илсе кăтартма пултаратăп, халăхсен туслăхĕн вăйне курса пĕрре мар савăннă. Литература куçарăвĕсене те культурăсен диалогĕ тесех хаклатăп. Эпĕ, сăмахран, вырăсла япăх мар пĕлетĕп пулин те, Пушкинăн «Евгений Онегин» поэмине чăвашла вуласан кăна лайăхрах ăнлантăм. Ман шутпа, вырăн-вырăнпа Пушкин йĕркисем чăвашла вырăслинчен те илемлĕрех, çепĕçрех янăраса геройсен чунне тарăнрах та уçса параççĕ. Акă, итлĕр-ха: «Татьяна, милая Татьяна!» – тет вырăссен чаплă поэчĕ. Хусанкай ăна: «Татьяна, чунăмçăм Татьяна!» – тесе куçарать. «Милая» вырăс чĕлхинче ялан усă куракан сăмах пулса кайнă. Ăна юратса çеç мар, тăрăхласа та, ăшри сивĕлĕхе пытарас тĕллевпе те калаççĕ. «Чунăмçăм» тесе вара пули-пулми персе ямаççĕ.

Хусанкайăн 1967 çулта «Хушка хумсем» кĕнеки тухрĕ. Ятне вырăсла куçараймасăр хăшкăлтăмăр вĕт. Чăвашла епле илемлĕ илтĕнет. Вырăсла тем тĕрлĕ те каласа пăхатпăр – çук, янăрамасть. Тепĕр сăмах çаврăнăшне вырăсларан чăвашла çавăрса калаймасăр аптăратăн. Ку пĕр чĕлхе тепринчен

чухăнраххине пĕлтермест, вĕсенчен кашни хăйĕн уйрăмлăхĕпе пуяннине çирĕплетет кăна.

– **Халăх педагогики ырă тĕслĕхпе юрату çинче никĕсленсе тăрать тетĕр. Ку темăпа сахал мар кĕнеке çырнă эсир. Сирĕн пек шухăшлавçă хальхи хĕрпе каччă, арçынпа хĕрарăм хушшинчи хутшăнусене асăрхамасăр юлмастех. Эсир çак темăран кăшт пăрăнарах тăнăн туйăнать**.

– Хамăн шухăша тарăннăнах палăртса каламанран-и? Çынна пысăк юрату тасатать, вăй парать, çунат хушать, телей кӳрет. Пирĕн яшлăхра каччă хĕре хапха патне çити ăсатса янинчен пуçласа иккĕшĕ пĕрле туй кĕрекине ларичченх çичĕ тапхăр урлă каçмаллаччĕ. Яш çын пике çине вăрттăн куç хывнинчен пуçласа ăна пуçласа чуп тăвиччен сахалтан та çур çул иртнĕ. Халĕ тӳрех вырăн çине йăвантараççĕ. «Юрату» сăмахăн пĕлтерĕшне те йӳнетсе хăварчĕç. «Заниматься любовью» тени мĕнле килпетсĕр илтĕнет. Чи таса, чи вăрттăн, икĕ çын çеç пĕлмелли хутшăнусене вăтанмасăр, намăсланмасăр çын куçĕ умне кăлараççĕ халĕ. Халăхăн кăмăл-сипетне ыр витĕм кӳрекен япала мар ĕнтĕ ку. Хамăрăн ĕмĕртен çирĕпленсе пынă йăласене манса ытти халăхсен пурнăç йĕркине шухăшламасăр йышăннинчен килет çакă. Çав вăхăтрах хамăр халăхăн традицийĕсем, культури, шухăшлавĕ мĕн тери пуян.

– **Халăх вăл çав тери ăслă педагог пулнине хăвăрăн наука ĕçĕсенчех çирĕплетсе панă эсир. Унтан та ытларах: нумай халăх этнопедагогикине тĕпченĕ, вĕсене танлаштарнă, хакланă. Уйрăмлăхĕсем чылай-и?**

– Кашни хăйĕн çулĕпе утать, хăйне тивĕçлĕ ăру ӳстерме тăрăшать. Чукчăсем, сăмахран, çав тери тӳрĕ кăмăллă халăх. Ман хăраххăм, çынна улталама пĕлмеççĕ. Вĕсен тĕлĕнмелле уяв – тӳрĕ чунпа пурăнакан çын уявĕ пур, март уйăхĕнче ирттереççĕ ăна. Тӳрĕ чунлă мар тесе сăмах тухнăшăнах чукча хăй çине алă хума пултарать.

Сăпка юрри нумай халăхăн пур, кунпа тĕлĕнтереймĕн. Ительменсен вара (вĕсем Камчаткăра пурăнаççĕ) ачана ыйхăран вăратакан юрăсем те пур. Эвенксем ывăл-хĕрне сак урлă выртнă чухнех ăс пама тытăнаççĕ: виçĕ çултине çĕçĕ тытма чармаççĕ, тăваттăра йĕлтĕр параççĕ, пиллĕкре – кĕсмен, улттăра – кимĕ. Иштĕр – путтăр, анчах çын пултăр.

Çиелтен пăхсан питĕ шелсĕр педагогика пек туйăнать. Юкагирсем виçĕ çулти ачана çĕмрен тыттараççĕ. Ывăлĕ вăрăм тунана персе тивертмелĕх вичкĕн куçлă пултăр теççĕ. Кун пек тĕслĕхсем нумай илсе пама пулать.

– **Çапла пуль те-ха... Таса чунлă чукчăсем çинчен мĕн чухлĕ анекдот çӳремест-ши?**

– Хĕрĕм, анекдотсенче те ырă кăмăллă вĕт вĕсем. Акă, итлĕр-ха. Чукча Мускава çĕнĕ кĕрĕк тăхăнса пынă тет. Çакна лифтра хурахсем хуптĕрленĕ: «Хыв кĕрĕке!» -теççĕ. «Мĕн, çулла çитрĕ те-им?» – савăнса ыйтать чукча.

Çак халăхăн чун тасалăхне хăшĕсем айванлăх пек кăтартма хăтланнăшăн чукчăсем хăйсем айăплă мар.

**Çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче пулнă май чăвашсем çинчен анекдот калани-не илтмен-и?**

– Хамăр халăхăмăр çыннисем çинчен ыррине кăна илтнĕ эпĕ. Чăваш ятне çĕклекен сумлă та хисеплĕ йăхташăмăрсем Раççейĕн тĕрлĕ регионĕнче нумайăн пурăнаççĕ. Антарктидăра та Чăваш сăмсахĕ пур вĕт. Пурин ятне те асăнса кайсан вĕçне-хĕрне те тухас çук. Эпĕ, эсĕ, ыттисем йĕркеллĕ тĕк – халăхăмăр та чыслă. Раççей хăйĕн чăвашĕсемпе мухтанма та пултарать.

Анекдот тенĕрен, пĕртен-пĕр чăваш халăхĕн хуняма çинчен калакан анекдотсем çук. Мĕншĕн мăшкăлламалла-ха хунямана çав таранччен? Вăл вĕт арăмăн амăшĕ çеç мар, ачасен юратнă кукамăшĕ те вĕт-ха. Вĕсене лăпкаса, ачашласа ӳстерекенни, чĕрçи çинче сиктерекенни.

Чăвашсем ачисене мĕн пĕчĕкренех аслашшĕ-асламăшне, кукашшĕпе кукамăшне юратма, хисеплеме хăнăхтараççĕ. Эпĕ те асанне ăшшипе ӳснĕ.

Тин тухнă «Кил илемĕ» кĕнекери «Юманкка» калав геройĕ – эпĕ хам. Çав тери юрататчĕ мана асанне. Тем тĕрлĕ ыйтупа сырăнсан та йăлăхмастчĕ, тарăхмастчĕ. Юмахĕ-халапĕ ăçтан тухса тăратчĕ тулĕк... Вăрçса калани пĕр хăлхаран кĕрсе тепринчен тухса каять. Юмах-халап урлă ăс кĕрсе юлать. Асанне хăй те такамран илтсе-астуса юлнă ĕнтĕ вĕсене. Халăх пултарулăхĕ упранса юлтăр тесе эпĕ вĕсене çыра-çыра хунă, пухса пынă.

Хырăмлă хĕрарăмсем пирки ман асанне: «Христос çуратма хатĕрленеççĕ», -тетчĕ. Çавăнтан юлчĕ пулĕ ĕнтĕ йывăр çын студенткăсене шеллесси. Экзаменсенче япăх паллăсем лартса парса вĕсен кăмăлĕсене хуçман эпĕ.

**– Геннадий Никандрович, сирĕн ăру та, пирĕн те юмах-халап итлесе, кĕнеке вуласа ӳснĕ. Хальхи ача-пăча пушă вăхăта телевизор е компьютер умĕнче ларса ирттерет. Унта вара мĕн кăна кăтартмаççĕ, мĕнпе кăна астармаççĕ. Ăрусем хушшинче шырлан пулса каймĕ-ши, ватти çамрăккине, çамрăкки ваттине ăнланайми пулмĕ-и каплах пырсан?**

– Хăрушă япала вăл ăрусем хушшинче çыхăну татăлни. Хамăр чĕлхене мантаракан, тăван культурăран пистерекен – пĕтĕмĕшле каласан, халăха салатакан пулăм. Акă 11 çул хушшинче 137 пин чăваша çухатрăмăр. Çук, вилмен вĕсем. Чăвашлăх тымарĕсем татăлнăран урăх халăха тухнă. Юнĕпе чăваш пулин те.

Массăллă культура текенни халăхсен хăйсен уйрăмлăхĕсене пĕтерсе пырать. Хальхи саманара пĕр-пĕр уяв тăваççĕ пулсан сана кафене е ресторана йыхравлаççĕ, пурнăçри паллă пулăмсемпе çыхăннă ĕçкĕ-çикĕсене те тӳлесе тара тытнă тамадасем кирек кам валли те юравлă пултăр тесе çырнă сценарисемпе ертсе пыраççĕ. Малтан вара апла пулман. Çулталăк çаврăмĕнчи уявсен, этем пурнăçĕнчи паллă пулăмсен кашнин хăйĕн йăли-йĕрки, çавна май расна илемĕ пулнă. Сĕтел хушшине ларнă-ларман черкке ӳпĕнтермен.

Уяв кĕрекинче малтан чăкăт пăснă (каснă), унтан типĕтнĕ хур кăларнă, шăрттанпа, пелĕшпе хăналанă. 1961 çулта ачасене юлашки хут вăййа илсе кайрăм. Эпĕ ун чух шкулта ĕçлеттĕм. Халь вăйăсем çук. Сĕтел хушшинче те юрламаççĕ, ĕçеççĕ çеç.

**– Геннадий Никандрович, миçе наци ывăлĕ-хĕрĕ сире хăйĕн вĕрентекенĕ вырăнне хурать?**

– Наука кандидачĕсемпе докторĕсене çĕр ытла хатĕрленĕ эпĕ. Вĕсенчен вăтăр иккĕшĕ – докторсем. Ман вĕренекенĕмсем хушшинче вăтăр ытла наци çынни. Пурнăç опычĕ, чĕлхесем, культура тĕрлĕрен пулин те, пире пĕр-пĕринпе ĕçлеме интереслĕ. Акă ăçта вăл халăхсен, культурăсен пĕр-пĕрне пуянлатакан диалогĕ. Тĕнче те çакăн пек туслă хутшăнусем çинче тытăнса тăрать.

*Волков, Г. Н. Халăхра ĕмĕрхи ăс упранать : [Г. Н. Волков ăсчахран илнĕ интервью] / Г. Н. Волков ; Г. Матвеева калаçнă // Тăван Атăл. – 2007. – № 10. – С. 128-130.*